**Сар пикем, хӗр пикем**

***Родион Петров кӗвви***

Ҫутă ҫăлтăр эп шырарăм
Йăлтăр-йăлтăр тӳпере,
Тӳпере тӗл пулаймарăм,
Тупрăм хамăр кӳршӗре.

Сар пикем, хӗр-пикем
Ҫăлтăртан та ҫутăрах,
Ҫăлтăртан та ҫутăрах,
Хӗвелтен те ăшăрах.

Эп хитре чечек шырарăм
Ҫурхи ешӗл улăхра,
Улăхра тӗл пулаймарăм,
Тупрăм хамăр урамра.

Сар пикем, хӗр-пикем
Мăкăньрен те хитререх,
Мăкăньрен те хитререх,
Лантăшран та хӳхӗмрех.

Юрăҫ-кайăк эп шырарăм
Шур ҫеҫкеллӗ пахчара,
Пахчара тӗл пулаймарăм,
Тупрăм хамăр вăйăра.

Сар пикем, хӗр-пикем
Шăпчăкран та ҫепӗҫрех,
Шăпчăкран та ҫепӗҫрех,
Тăрирен те селӗмрех.

*Сементер, Ю. «Сар пикем, хӗр пикем» : [юрă] / кӗвви Р. Петровăн ; сăвви Ю. Сементерӗн // Тантăш. – 1999. – 15 ака (№ 16). – С. 7.*